26-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
МАРТ
3
ЭРНЕКУН
44(6539) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 29-мĕшĕнче **ПСКОВ** енче пирĕн ҫарсем наступлени туса пынă, тăшманпа ҫапăҫса халăх пурăнакан 250 пункта ытла туртса илнĕ, ҫав шутра— **ПОГОРЕЛКА**, (ПСКОВ хулинчен 10 километр ҫурҫĕртерехре), **ПОДЛИПЬЕ, ПОДБОРОВЬЕ, ЛОПАТОВО, КУТУЗОВО, ЛОПАТИХА, ТЕШКОВО, ВЕРХНИЙ МОСТ, ОСНЮГИ, КЛИМОВА, МАЛЬКОВА, МАЛАЯ ПУСТЫНЬКА, БРАГИНО, ВЫБОР, КОПЫЛОВО** ялĕсем тата **ДОЛГОРЕПИЦА** чугун ҫул станцийĕ.

НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен ҫурҫĕр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем, тăшман хирĕҫ тăнине ҫĕнтерсе, Калинин облаҫĕнчи район центрне—**НОВОРЖЕВ** хулине туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата тăшманпа ҫапăҫса 60 яла ытла йышăннă, ҫав шутра—**СОБОЛИЦЫ, ОСИНКИНА, АНАШКИНА, БУЛАХОВО, БОРОДИНО, БАРАНОВО, ДЕМИНА ГОРКА, ДЕВИЧЬЕ** ялĕсем.

КРИВОЙ РОГ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн ҫарсем ăнăҫлан малалла тапăнса пынă Днепропетровск облаҫĕнчи район центрне—**ШИРОКОЕ** хулине, **ИНГУЛЕЦ** хулине, ҫавăн пекех тата тăшманпа ҫапăҫса, халăх пурăнакан ытти 70 пункта ытла йышăннă. Ҫав шутра — **НОВОСЕЛОВКА, ДАР РАДЕВИЧИ, НОВОКУРСКАЯ, ШЕСТЕРНЯ, НИКОЛАЕВКА, ВЫСОКОПОЛЬЕ, НОВО-ВОЗНЕСЕНСКОЕ, ИВАНОВКА, БЕЛЯЕВКА, ДУБЧИНО** ятлă пысăк ялсем тата **ВЫСОКОПОЛЬЕ** ятлă чугун ҫул станцийĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса ҫӳренĕ.

Февралĕн 28-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем мĕнпур фронтсенче нимĕҫсен 25 танкне ҫĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 36 самолетне персе ӳкернĕ.

МАРТĂН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ленинград фрончĕн ҫарĕсем темиҫе кун ҫитет ĕнтĕ, **НАРВА** хулинчен кăнтăртарахра, тăшманпа ҫапăҫса, **НАРВА** шывĕ урлă каҫнă та тăшманăн вăйлă ҫирĕплетнĕ оборонине татнă, **НАРВА** шывĕн хĕвеланăҫ енче 35 километр сарлакĕш, 15 километр тăршшĕ плацдарм тытса илнĕ. Пирĕн ҫарсем **ВЯСКА, МУСТАЙЫЗ, СУРЕСОРУ, КЯРЕКОННА, СЕБЕРГИ, АУВЕРЕ, ХАВАКИНГУ, МЕТСКЮЛА, УХЕКОННА** ялĕсене туртса илнĕ, **НАРВА** хулипе **ТАЛЛИН** хули хушшинчи чугунҫула **НАРВА** хулинчен 15 километр хĕвеланăҫнерехре **АУВЕРЕ** чугун ҫул станцийĕ районĕнче татнă.

ПСКОВ хули енче пирĕн ҫарсем мартăн 1-мĕшĕнче ҫаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 70 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра — **НЕВАДИЦЫ, БОЛЬШАЯ ЖАДУНКА, РЯБОВА, ЛЕНЕВА ГОРА, ОРЕХОВИЧИ, ОЛИСОВО, ПЕРЕСВЕТОВО, БОЛОТОВО, СОСНИЦЫ, ВАСУТКИНО, КАШИНО** ялĕсем тата **РУСАКИ** чугун ҫул станцийĕ. Пирĕн ҫарсем **ПСКОВ** хулипе **ИДРИЦА** хули хушшинчи чугун ҫула татнă.

НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен ҫурҫĕр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем тăшманпа ҫапăҫса темиҫе ял туртса илнĕ. Вăл шутра **ДУПЛИ, ЛИТОВО, ПУНДРОВКА, КУЯЛЫ, ЗАБОРЬЕ, ЛУНЕВКА.**

ВИТЕБСК хули енче пирĕн ҫарсем малалла тапăнса пынă, 30 ял туртса илнĕ. Вăл шутра **БАТАЛИ, ПЕКАРИ, ОКУЛОВИЧИ, АБУХОВО, ТИТКОВА, ВОРОНЫ, СЕЛЮТЫ.**

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса ҫӳренĕ.

Февралĕн 29-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем мĕнпур фронтсенче нимĕҫсен 16 танкне ҫĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 9 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн ҫарĕсем, темиҫе кун ҫитет ĕнтĕ, тăшманпа ҫапăҫса, Нарва хулинчен кăнтăртарахра Нарва шывĕ урлă каҫнă. Тăшман, хăватлă оборона позицийĕсемпе усă курса, хытă хирĕҫ тăнă, хăй йышăннă позицисене тем пулсан та хăй аллинчех тытса тăма тăрăшнă. Совет пехотинецĕсем, артиллеристсем пулăшнипе, нимĕҫсем хирĕҫ тăнине ҫĕмĕрсе тăкнă та Нарва шывĕн хĕвеланăҫ хĕррипче 35 километр сарлакĕш, 15 километр тăршшĕ плацдарм тытса илнĕ. Пирĕн ҫарсем Нарва хулипе Таллин хули хушшинчи чугун ҫула Нарва хулинчен 15 километр хĕвеланăҫнерехри Аувере станцийĕ районĕнче татнă. Пĕр участокра пĕр чаҫри боецсем хаяр ҫапăҫура тăшман пехотин икĕ полкне аркатса тăкнă. Каялла чакакан гитлеровецсем 25 тупă, 40 миномет тата снарядсемпе минăсем нумай пăрахса хăварнă. Тепĕр участокра совет ҫарĕсем икĕ кун хушши пынă ҫапăҫусенче 1.200 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 3 юсавлă танк, хăй тĕллĕн ҫӳрекен 4 тупă, 16 хир туппи, 90 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Псков хули енче пирĕн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 70 пункта ытла тытса илнĕ. Совет боецĕсем нимĕҫсене вăйлă ҫирĕплетнĕ темиҫе пунктран ҫапса кăларнă, ҫав пунктсем вĕсем пурте Псков хули патне илсе пыракан ҫулсене хӳтĕлесе тăнă. Русаки чугун ҫул станцине туртса илсе, пирĕн ҫарсем Псков хулипе Идрица хули хушшинчи чугун ҫула татнă. Ҫапăҫусенче тăшмана сынсемпе техника тĕлĕшĕнчен йывăр сухатусем кӳрессĕ. Пĕр чаҫри боецсем 600 нимĕҫ салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Ҫав чаҫри артиллеристсем, усă позицисенчен персе, нимĕҫсен 7 танкĕпе 18 туппине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн разведчиксем нимĕҫсене пысăк сухатусем кӳрессĕ. Пĕр районра 17 красноармеец тăшман тылне тухнă та шоссе ҫулне пӳлсе лартнă. Ҫав ҫулпа каялла чакакан нимĕҫсен пысăк колоннине пулеметпа шатăртаттарма пуҫланă. Пирĕн боецсен ҫав пĕчĕк ушкăнне нимĕҫсем темиҫе хутчен те атакăланă. 300 гитлеровеца ҫити пĕтерсе тăкнă хыҫҫăн пирĕн разведчиксем ҫĕрле тăшмантан уйăрăлнă та хăйсен чаҫне таврăннă.

* * *

Новосокольники хулинчен ҫурҫĕр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем ҫапăҫса малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чаҫĕсем халăх пурăнакан темиҫе пункта тытса илнĕ. Ҫав пунктсемшĕн пынă ҫапăҫусенче 400 нимĕҫ салтакĕпе офицерне ҫити пĕтерсе тăкнă, 11 тупă, 5 йывăр миномет, 34 пулемет тата 3 боеприпас складне тытса илнĕ. Тепĕр соединени чаҫĕсем Новоржев—Пушкинские Горы шоссе ҫулĕпе малалла куҫса пырса, нимĕҫ пехотине пĕр батальона ҫити пĕтерсе тăкнă, тыткăна чылай илнĕ.

* * *

Львов облаҫĕнчи районсенчен перинче кĕрешекен партизансен отрячĕ февралĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле нимĕҫсен пĕр ялти гарнизонне атакăланă. Хаяр ҫапăҫура совет патриочĕсем гитлеровецсене пĕр рота таран вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕҫсенне 100 винтовкăпа автомат, 57 автомашина, 30 тонна бензин, 200 лаша тата тырă склачĕ тытса илнĕ. Нимĕҫсем хупса лартнă совет гражданĕсене пирĕн боецсем фашистсен тĕрминчен ирĕке кăларнă. Львов облаҫĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ нимĕҫсен темиҫе ҫар эшелонне тупăсемпе пенĕ. 5 паровоз, 48 платформа тата 16 вагон ҫĕмĕрнĕ.

* * *

Пирĕн ҫарсем нимĕҫ танкĕсен гренадерски «Фельдхернхалле» ятлă дивизине йывăр поражени кӳнĕ. Ҫав дивизири салтаксене нумайĕшне тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнĕ Карл Вольф, Иозеф Хенсбергер, Курт Виллер тата ыттисем те ҫапла каласа кăтартнă: «Иртнĕ ҫулхи декабрьте пирĕн дивизие Хĕвелтухăҫ фронтне илсе килчĕҫ. Фронта тухиччен темиҫе кун маларах пирĕн дивизие штурмовой отрядсен руководителĕ Шепман пăхса тухрĕ. Вăл салтаксене сăмах каларĕ. Унăн сăмахĕ ҫапла пулчĕ: ҫу хушшинче нимĕҫ ҫарĕсем тăшмана чылай территори каялла пачĕҫ, 5.000 танка яхăн ҫухатрĕҫ. СС дивизийĕсене Российăна ярса, командовани вĕсем унти фронта ҫирĕп тытса тăрасса шанать, терĕ. Эпир малтан Витебск хули патĕнче тăтăмăр, вара унтан пире васкасах Ленинград фронтне куҫарчĕҫ. Ҫапăҫусем йывăр пулассине эпир пĕлсе тăнă. Анчах та эпир ку фронтра курни эпир кĕтниччен нумай хăрушăрах пулчĕ. Пире нимĕҫ фрончĕ йăлтах ишĕлсе аннă пекех туйăнчĕ. Эпир хăйсен чаҫĕсенчен ҫухалса юлнă, хăйсен хĕҫпăшалне пăрахнă нимĕҫ салтакĕсен кĕтĕвĕсене куртăмăр. Кирек мĕн ыйтсан та вĕсем ҫапла ҫеҫ калатчĕҫ: «Аллес капут», ĕнтĕ пĕтĕмпех пĕтрĕмĕр, тетчĕҫ. Пирĕн дивизи те питĕ пысăк ҫухатусем тӳсрĕ, халĕ пĕрмаях каялла чакса пырать. Пĕтĕм нимĕҫ ҫарĕ вилĕм шăтăкĕ патне сывхарса пынине ĕнтĕ салтаксем нумайĕшĕ ăнланса илме пуҫларĕҫ».

* * *

Житомир облаҫĕнчи Дзержинск поселокĕнчи сынсем фашистла нимĕҫ ирсĕрĕсем тата вĕсем майлă кĕрешекен венгерсем тунă тискер ĕҫсем ҫинчен ҫапла каласа кăтартнă: «1943 ҫулхи декабрĕн 15-мĕшĕнче темиҫе ҫĕр венгер салтакĕ Дзержинск поселокне хупăрласа илчĕ. Венгерсем нимĕҫ полицейскийĕсемпе пĕрле пĕр кил хыҫҫăн тепĕр киле ҫӳресе, 14—70 ҫулхи арҫынсене пурне те тытса кайрĕҫ. Ҫав кун гитлеровецсем поселокри темиҫе ҫĕр мирлĕ ҫынна тытрĕҫ те Шепетовкăри концентрациллĕ лагере ячĕҫ. Ҫав лагерьте 5.000 ытла мирлĕ ҫын пулнă, вăл шутра хĕрарăмсем те, ачасем те. Эпир виҫĕ эрне хушши ҫав лагерьте питех те йывăр условисенче пурăнса ирттертĕмĕр. Выҫă пирки ҫынсен мĕлкисем кăна тăрса юлчĕҫ, вĕсем те аран-аран кăна уткалатчĕҫ. Январь уйăхĕн пуҫламĕшĕнче гитлеровецсем лагерьти ҫынсене пурне те хĕвеланăҫнелле хăваласа кайрĕҫ. Халран кайнă стариксем, хĕрарăмсем, ачасем, малалла утма пултараймасăр тăра-тăра юлатчĕҫ. Нимĕҫсемпе венгерсем вĕсене пĕр хĕрхенмесĕр чăпăрккапа тата пăшал приклачĕсемпе хĕнетчĕҫ, малалла пачах та утма пултарайманнисене пĕтĕм колонна куҫĕ умĕнчех пере-пере пăрахатчĕҫ».

Фронта тата вăйлăрах пулăшар

СĔНТĔР. (Хамăр корр.). Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ Хĕрлĕ Ҫар 26 ҫул тултарнă ятпа панă приказа районри ĕҫсыннисем питĕ хавасланса кĕтсе илчĕҫ.

— Верховный Главнокомандующин приказĕ пире, колхозниксене, тылра ҫĕнĕ вăй-хăватпа ĕҫлеме чĕнет. Ҫĕнтерӳ куннe ҫывхартас тесен, пирĕн кăҫал та та вăйлăрах тырпул туса илмелле,—терĕҫ Орининăри «Красное Сормово» колхоз членĕсем, приказа радиопа итленĕ хыҫҫăн.

Шомик ялсоветĕнчи «Колос» колхозра приказа итленĕ хыҫҫăнах нумай сынлă митинг пулса иртрĕ. Сулпуҫăн приказне колхозниксене колхоз председателĕ Тямин юлташ ăнлантарса пачĕ.

Сулпуҫ приказĕ колхозниксене тухăҫлăрах ĕҫлеме ҫĕклерĕ. «Колос» колхоз членĕсем сулпуҫăн приказне пурнăҫа кĕртме тытăннă. Колхозра торф, юшкăн тата тислĕк кăларма ятарласа бригада тунă. Февралĕн 24-мĕшĕнче 32 колхозник пĕр талăк хушшинче кăна 428 лав юшкăн кăларнă. В. Зайцев А. Кольцов, А. Романов колхозниксем пĕр кун хушшинче кашни виҫшер тонна юшкăн кăларнă.

Хачăк ялсоветĕнчи «1-ое мая» колхоз членĕсем Сталин юлташăн приказне ĕҫпе ответлеҫҫĕ. Колхозниксем ҫак иртнĕ икĕ кун хушшинче вăрҫă вăхăтĕнчи налог укҫине 20 пин тенкĕ ытла тӳленĕ. Колхозниксем ҫуракине хатĕрленсе ҫитмелли фронтовой уйăхлăха активлăн хутшăннă.

Т. ИВАНОВ.

Сталин ячĕпе тăракан завод коллективĕн примерĕпе

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе работницăсем, Сталин ячĕпе тăракан артиллери завочĕн коллективĕ Совет Союзĕнчи мĕнпур заводсемпе фабрикăсен коллективĕсене чĕнсе каланине хапăл туса йышăнса, тракторсемпе ял-хуҫалăх машинисем валли запаслă пайсем хатĕрлемелли пĕрремĕш кварталти задание палăртнă срокран 10 кун малтан пурнăҫлама пулчĕҫ.

Забиякин юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ, февраль уйăхĕнче тракторсем валли запаслă пайсем тăвас задание срокчен пурнăҫласа, ку ĕҫе татах та хăвăртлантарма пулчĕ. Флегентов, Иванов стахановецсем ҫак ответлă ĕҫре задание яланах 200 процент тултараҫҫĕ. Ҫавăн пекех ку ĕҫ Лоянич юлташ начальник пулса ĕҫлекен цехра та ăнăҫлăн пулса пырать.

А. ЕГОРУШКИН
Заводри партбюро секретарĕ.

В. М. Молотов юлташ Канада посолне Д. Уилгресс господина йышăнни

Февралĕн 28-мĕшĕнче СССР Ют ҫĕршыв Ĕҫĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Канадăн ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне Д. Уилгресс господина йышăннă. Ку йышăну Д. Уилгресс господин хăйĕн верительнăй грамотисене СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне пама хатĕрленнĕ тĕлĕшпе пулнă.

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕ

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн 1944 ҫулхи мартăн 1-мĕшĕнчи ларăвĕ ҫинчен

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Ĕнер, мартăн 1-мĕшĕнче, каҫхине 7 сехетре, РСФСР Верховный Совечĕн ларăвĕсем пулакан залра, Кремльте, РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш Сессийĕ уҫăлнă.

Председатель сĕтелĕ хушшинче—РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ **А. А. Жданов** юлташ, председателĕн заместителĕ **А. Х. Тынчеров** юлташ.

Сессие РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ **А. А. Жданов** депутат уҫать.

Жданов юлташ сессисем хушшинчи вăхăтра уйрăм суйлав округĕсем тăрăх 15 депутат суйлани ҫинчен пĕлтерет. Жданов юлташ мандат комиссин докладне тума **А. И. Шахурин** депутата сăмах парать.

Шахурин юлташ хăйĕн докладĕнче РСФСР Верховный Совечĕн мандат комиссийĕн постановленине вуласа парать. Ҫав постановленипе уйрăм суйлав округĕсем тăрăх суйланă РСФСР Верховный Совечĕн депутачĕсен полномочийĕсене тĕрĕслесе тухни ҫинчен каланă.

РСФСР Верховный Совечĕ, **А. И. Ефремов** депутат сĕннипе, мандат комиссин доклачĕ тăрăх ҫакăн пек постановлени йышăнать:

«1. РСФСР Верховный Совечĕн Мандат комиссийĕн докладне ҫирĕплетес.

2. РСФСР Верховный Советне 15 уйрăм суйлав округĕсем тăрăх суйланă депутатсен полномочийĕсене тĕрĕс тесе шутлас».

Шкирятов юлташ, вăтă депутатсен совечĕ ячĕпе, РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕ **П. С. Макарова** юлташ вилнĕ пирки РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕ пулма **М. В. Сарычева депутата** суйлама сĕнет.

РСФСР **Верховный** Совечĕ **М. В. Сарычева** юлташа РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕ пулма пĕр саслăн суйлать.

Кун хыҫҫăн РСФСР Верховный Совечĕ кун йĕркине ҫирĕплетме тытăнать.

Жданов юлташ РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш Сессине пăхса тухма тăратнă ыйтусене йĕркерен каласа тухать.

В. П. Пронин депутат РСФСР Верховный Советĕнче пăхса тухма тăратнă ыйтусене РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш Сессийĕн кун йĕркине кĕртме сĕнет.

РСФСР Верховный Совечĕ пĕр саслă пулса ҫакăн пек кун йĕркине ҫирĕплетет:

1. РСФСР-ăн 1944 ҫулхи государство бюджетне ҫирĕплетесси тата РСФСР-ăн 1940-мĕш, 1941-мĕш, 1942-мĕш ҫулсенчи государство бюджетне пурнăҫлани ҫинчен тунă отчетсене ҫирĕплетесси.

Ку ыйтăва РСФСР Совнаркомĕ тăратнă.

2. РСФСР-ăн союзлă республикăри Оборона Халăх Комиссариатне тата РСФСР-ăн союзлă республикăри Ют ҫĕршыв Ĕҫĕсен Халăх Комиссариатне тăвасси ҫинчен.

Ку ыйтăва РСФСР Совнаркомĕ тăратнă.

3. РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председательне суйласси.

Сесси кун йĕркин 1-мĕш пункчĕ тăрăх—РСФСР-ăн 1944 ҫулхи государство бюджечĕ ҫинчен тата 1940-мĕш, 1941-мĕш, 1942-мĕш ҫулсенчи государство бюджетне мĕнле пурнăҫлани ҫинчен—РСФСР Финанс Халăх Комиссарĕ **А. А. Посконов** юлташ доклад тăвать.

Кун хыҫҫăн РСФСР Верховный Совечĕ РСФСР-ăн 1944 ҫулхи бюджечĕ ҫинчен тата 1940-мĕш, 1941-мĕш, 1942-мĕш ҫулсенчи государство бюджетне мĕнле пурнăҫлани ҫинчен РСФСР Верховный Совечĕн бюджет комиссийĕн председателĕн **И. А. Власов** депутатăн содокладне итленĕ.

Ҫакăнпа РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăннă.

Сессин 1-мĕш ларăвĕн дневникĕ

Мартăн 1-мĕшĕнче, Кремльре, РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш Сессийĕ уҫăлнă. Ҫичĕ сехет тĕлне РСФСР Верховный Совечĕн ларусем пулакан залне депутатсем тата хăнасем — Мускаври предприятисенчи стахановецсемпе ударниксем, ученăйсем, писательсем, искусство работникĕсем, Хĕрлĕ Ҫар представителĕсем, Совет Союзĕнчи тата ют ҫĕршывсенчи хаҫатсен корреспонденчĕсем пухăннă.

Председатель сĕтелĕ хушшинче: РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ **А. А. Жданов** депутат тата Председателĕн Заместителĕ **А. Х. Тынчеров** депутат. Ложăсенче **В. М. Молотов, М. И. Калинин, К. Е. Ворошилов, Л. М. Каганович, А. А. Андреев, А. И. Микоян, Н. Л. Шверник, К. М. Маленков, М. А. Вознесенский** юлташсем, РСФСР Верховный Совет Президиумĕн членĕсем, РСФСР Совнаркомĕн Председателĕ **А. Н. Косыгин** юлташ, РСФСР Совнарком Председателĕн заместителĕсем, Халăх Комиссарĕсем. Вĕсем ложăсене тухнине депутатсемпе хăнасем нумайччен тăвăллăн алă ҫупса кĕтсе илнĕ.

* * *

Сесси кун йĕркин пĕрремĕш ыйтăвĕ тăрăх—РСФСР-ăн 1944 ҫулхи государство бюджечĕ ҫинчен тата 1940-мĕш, 1941-мĕш, 1942-мĕш ҫулсенчи государство бюджетне мĕнле пурнăҫлани ҫинчен РСФСР Финанс Халăх Комиссарĕ **А. А. Посконов** юлташ доклад туса панă.

— РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш Сессийĕ, — тенĕ докладчик, — Хĕрлĕ Ҫар историллĕ ҫĕнĕ ҫĕнтерӳсем тунă вăхăтра ĕҫлеме тытăнчĕ. Хĕрлĕ Ҫар ҫĕнтерĕвĕсене пула Россия Федерацийĕн пĕтĕм территорине тенĕ пекех нимĕҫ захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Нимĕҫсене Ленинград ҫывăхĕнче аркаста тăкни, совет ҫарĕсем 700 ҫул каярах пирĕн авалхи тăвансем нимĕҫ йытă-рыцарĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех ҫĕмĕрсе тăкнă вырăна, Чудски кӳлĕ ҫыранĕсем патне тухни, тăшмана Украинăра тата Белоруссире кăватлăн пыра-пыра ҫапни гитлеровецсене совет ҫĕрĕ ҫинчен тĕпĕ-йĕрĕпех хăваласа кăларас сехете ҫывхартать. Хĕрлĕ Ҫар ҫав чаплă ҫĕнтерӳсене пĕтĕм совет халăхĕ паттăррăн та вăй-хăвата шеллемесĕр ĕҫленине пула тума пултарчĕ. Совет Союзĕнчи халăхсем нимĕҫ захватчикĕсене хирĕҫ пыракан Отечественнăй вăрҫăра большевиксен партийĕпе совет правительстви тавра нихăҫанхинчен те таччăнрах пĕтĕҫрĕҫ, халĕ вĕсем хамăр ҫулпуҫ тата учитель Сталин юлташ ертсе пынипе ҫĕнтерӳ патне шанчăклăн пыраҫҫĕ.

Депутатсемпе хăнасем ҫак сăмахсене тăвăллăн алă ҫупса кĕтсе илеҫҫĕ. Тăвăллăн алă ҫупни нумайччен лăпланаймасть.

Посконов юлташ малалла РСФСР-ăн 1940-мĕш, 1941-мĕш, тата 1942-мĕш ҫулсенчи государство бюджетне мĕнле пурнăҫлани ҫинчен каласа парать. Докладчик вăрҫă вăхăтĕнчи ҫулсенче бюджетăн тупăш никĕсĕ ҫирĕпленнине уйрăмах палăртать. Ҫак ҫи малтан, хуҫалăх организацийĕсен ĕҫне лайăхлатнипе, ĕҫ тухăҫлăхне тата накопленисене ӳстернипе тунă.

Ҫакна Посконов юлташ РСФСР-ăн 1944 ҫулхи государство бюджечĕ ҫинчен каласа парать.

—Бюджетăн тупăш пайĕ, — тет вăл, — Халăх Комиссарĕсен Совечĕ палăртнă тăрăх, 24.588 миллион тенкĕ чухлĕ пулмалла, урăхла каласан, иртнĕ ҫулхинчен 2.771 миллион тенкĕ чухлĕ ытларах. Бюджетăн хăйĕн дохочĕсемпе ҫирĕплетнĕ доходсем 31,4 процент ӳсмелле, ҫав вăхăтрах Пĕтĕм Союзри тупăшсенчен кĕрекен укҫа-тенкĕ хисепĕ 4,4 процент чакать.

Государство бюджечĕн тупăш пайĕнче промышленность тупăшĕсенчен кĕрекен укҫа-тенкĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн промышленность халĕ вăрҫă заказĕсене кăна мар пурнăҫа кĕртет, ҫавăн пекех тата куллен кирлĕ таварсем кăларассине те ӳстерсе пырать.

Докладчик республикăри промышленность алликче продукци ытларах туса кăларма тата накопление ӳстерме пысăк майсем пуррине палăртать. Вăл майсенчен пĕри чĕртаварсемпе материалсене перекетлĕн тыткалани пулать. Шалти ресурссемпе усă курас тата накопление ӳстерес тĕлĕшпе районти промышленноҫпа промысла кооперацийĕн алликче питĕ пысăк майсем нумай. Советсен вырăнти органĕсен вырăнти чĕртаварсенчен куллен кирлĕ таварсем тата апат-ҫимĕҫсем туса кăларасси ҫине хытă ҫавăрăнса пăхмалла. Ҫакă вăл халăх ыйтăвĕсене лайăхрах тивĕҫтерме тата государство бюджечĕн тупăшне ӳстерме пулăшать.

—Накопление ӳстерессишĕн кĕрешесси тата хамăрăн хуҫалăхри пĕтĕм материалсемпе укҫа-тенкĕ ресурсĕсене фронтпа тыл ыйтăвĕсене тивĕҫтерме мобилизацилесси, — тет Посконов юлташ,—мĕнпур совет тата хуҫалăх организацийĕсен хисеплĕ задачи пулса тăрать.

Бюджетăн тупăш пайĕн тĕп статьисем (оборотран илекен налог, халăхран пухакан налогсем, колхозсенчен илекен подоходнăй налог, государство заемĕсем, укҫапа ялалăсен лотерейи тата перекет кассисенчи вкладсем) ҫинчен каласа панă хыҫҫăн докладчик бюджетăн расход пайĕ ҫинчен калама тытăнать.

1944 ҫулхи государство бюджечĕн расхочĕсене 24.573 миллион тенкĕ чухлĕ палăртнă. Ҫак хисепрен пысăк пайĕ социаллă-культурăллă мероприятисене пурнăҫа кĕртнĕ ҫĕре каять.

Бюджет тăрăх халăха ҫутта кăларас ĕҫе укҫа-тенкĕ парасси пысăк вырăн йышăнса тăрать, ҫакă вăл пĕтĕм расходсен хисепĕнче 55 процент чухлĕ пулмалла. Шкулсем, аслă шкулсем, ачасен сачĕсемпе ачасен ҫуртĕсем, ҫутта кăларас тĕлĕшпе ĕҫлекен, наука тата ытти культура учрежденийĕсем бюджетран иртнĕ ҫулхинчен 3.251 миллион тенкĕ ытларах укҫа илеҫҫĕ. Ҫак ҫĕнĕрен укҫа-тенкĕпе усă курса, халăха ҫутта кăларас тĕлĕшпе ĕҫлекен учрежденисен хисепне ӳстермелле. Ку ĕҫ уйрăмах нимĕҫ оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă крайсемпе облаҫсенче анлăн саралмалла.

РСФСР-ăн 1944 ҫулхи государство бюджечĕ тăрăх ĕҫсыннисен сывлăхне сыхлас ĕҫе укҫа-тенкĕ ытларах пама пăхнă. Сывлăха сыхлас ĕҫе каякан укҫа-тенкĕ, 1943 ҫулхипе танлаштарсан, 815 миллион тенкĕ чухлĕ ӳсмелле, урăхла каласан ҫакă вăл 13.9 процент ытларах пулать. Сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕҫлекен учрежденисен хисепĕ кăҫал вăрҫăченхи ҫултинчен те ытларах пулмалла.

Социаллă обеспечени енĕпе тухакан расходсем чылай ӳсеҫҫĕ. 1943 ҫулта социаллă обеспечени енĕпе 363 миллион тенкĕ расходланă пулсан, кăҫалхи бюджет тăрăх 489 миллион тенкĕ расходлама пăхнă.

— Ĕҫ тухăҫлăхне малалла ӳстерсе пырас тата нимĕҫ оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă облаҫсемпе крайсенчи промышленноҫа, ялхуҫалăхне, пурăнмалли ҫурт-йĕрсемпе коммуналлă хуҫалăха юсаса ура ҫине тăратас задачăсем, — тет Посконов юлташ, — капитальнăй строительствăн пысăк программине пурнăҫа кĕртме хушаҫҫĕ. Бюджет тăрăх ҫав строительство валли 1943 ҫулхинчен виҫĕ хут ытларах, урăхла каласан, 809 миллион тенкĕ укҫа хывма палăртнă. Кунсăр пуҫне, ҫĕнĕ строительство валли 252 миллион тенкĕ хуҫалăх организацийĕсем хăйсен тупăшĕсенчен уйăрса параҫҫĕ. Ҫапла вара 1944 ҫулта капитальнăй строительствăна 1061 миллион тенкĕ чухлĕ укҫа хывма палăртнă. Ку хисепрен 500 миллион тенки гитлерла оккупантсенчен ирĕке кăларнă районсенчи хуҫалăха юсанă ҫĕре каять. Ҫак хисепĕн тĕп пайне пурăнмалли ҫурт-йĕрсемпе коммуналлă хуҫалăха юсанă ҫĕре хывма палăртнă.

Малалла Посконов юлташ хуҫалăх организацийĕсемпе вырăнти советсен руководителĕсем капитальнăй ĕҫсен планĕсене кăна мар, ҫавăн пекех пурăнмалли ҫурт-йĕр фондне тата промышленность оборудованийĕсене юсас плана пĕтĕмпех тултарма тивĕҫлине палăртать.

— Фашистла Германие хирĕҫ пыракан вăрҫă, — тет докладчик, — материалсемпе укҫа-тенкĕ ресурсĕсене нумай расходлама ыйтать. Ку ĕнтĕ государство укҫин кашни пусне шута илсе пырас ыйтăва ҫивĕччĕн лартать, перекетлĕх режимне ҫирĕп пăхăнса пыма, финанс ĕҫне тĕрĕслесе тăрассине вăйлатма, Финанс Халăх Комиссариачĕн контрольпе ревизи органĕсен ĕҫне лайăхлатма хушать.

Посконов юлташ хăйĕн доклачĕн юлашки пайĕнче автономлă республиксен, крайсен, облаҫсен тата хуласен бюджечĕсем ҫинчен каласа парать.

Иртнĕ ҫулхипе танлаштарсан нимĕҫ захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă

(Малашни 2-мĕш страницăра).

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕ

Сессин 1-мĕш ларăвĕн дневникĕ

ЮЛАШКИ

крайсемпе автономлă республикăсен тата облаçсен бюджечĕсем уйрăмах нумай ӳсеççĕ. Вĕсем — Смоленск, Орел, Курск, Ростов, Ленинград облаçĕсем, Краснодар, Ставрополь крайĕсем тата Кабардино-Балкар АССР-ĕ. Çав крайсемпе облаçсем тата республикăсем тăрăх социаллă-культурăллă мероприятисене пурнăçа кĕртме каякан укçа-тенкĕ, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 100 процент ытла ӳсмелле. Çавăн пекех халăх хуçалăхне памалли укçа-тенкĕ хисепĕ те 2,5 хут ӳсет.

Докладчик Орел облаçĕн примерĕпе ирĕке кăларнă облаçсенче хуçалăха юсаса ура çине тăратас ĕçсем мĕнле анлăн сарăлса пынине кăтартса парать.

— Орел облаçĕнчи примерсенчен ирĕке кăларнă районсенче хуçалăха юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем пурнăçа кĕни курăнать. Анчах вăл ĕçĕн пуçламăшĕ кăна-ха. 1944 çулта темиçе хут пысăкрах ĕçсене пурнăçа кĕртмелле. Нимĕç оккупанчĕсем ишĕлтернĕ хуçалăха юсаса ура çине тăратас ĕç чăнахах та пĕтĕм халăхăн задачи пулса тăчĕ. Вăл задача пурнăçа кĕресси пирки иккĕленмелли те çук.

— РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджетне ăнăçлăн пурнăçа кĕртни, — тесе пĕтерет хăйĕн докладне Посконов юлташ. — Россия Федерацийĕнчи ĕççыннисем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкас ĕçе пана пысăк парне пулса тăрĕ. Нумай миллионлă совет патриочĕсем вăй-хăвата шеллемесĕр паттăрла ĕçленипе çĕршывăн производствăллă вăйĕсене ӳстерсе пыма, материалсемпе укçа-тенкĕн мĕнпур ресурсĕсене мобилизацилеме, çапла вара, пирĕн юратнă çулпуç тата полководец Совет Союзĕн Маршалĕ аслă Сталин ертсе пынипе, çĕнтерĕвĕн çутă кунне çывхартма пулăшаççĕ.

Докладчикăн юлашки сăмахĕсене залра ларакансем тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. Сталин юлташа саламласа тăвăллăн алă çупни нумайччен янăраса тăрать.

Содоклад тума РСФСР Верховный Совечĕн бюджет комиссин председательне **И. А. Власов** депутата сăмах параççĕ.

— Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенчи финанс ĕçĕсем, — тет Власов юлташ, — Российăри Федерациллĕ Советлă Социализмлă Республика хăйĕн экономикипе финанс ресурсĕсене япăхтарни çинчен мар, пачах урăхла, вĕсене çулран çул ӳстерсе пыни çинчен каласа параççĕ. Государство бюджечĕн тупăшĕсем халăх хуçалăхĕнче пулакан накопленирен кăна мар, халăхран укçа-тенкĕ пухăннипе те пулса пынă. Рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, совет интеллигенцийĕ, хăйсем перекетленĕ укçа-тенкĕне пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн хăватне тĕреклетнĕ çĕре парса, патриотла чаплă ĕç турĕç.

Бюджет комиссийĕ ячĕпе Власов юлташ республикăн государство бюджетне пурнăçа кĕртни çинчен калакан отчетсене РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пăхса тухнă чухлĕ çирĕплетме сĕнет.

Власов юлташ, хăйĕн содоклачĕн иккĕмĕш пайне калама пуçăнсан, çакна палăртать:

— Бюджет комиссийĕ çапла шутлать: РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджетне республика халăх хуçалăхĕн планĕпе тата ССР Союзĕн СССР Верховный Совечĕн Х-мĕш Сессийĕ çирĕплетнĕ бюджечĕпе килĕштерсе тунă.

Власов депутат РСФСР-ăн 1944 çулхи бюджетĕнче республика хăйĕн тупăшĕсене чылаях ӳстерме палăртни тата союзлă бюджетăн тупăшĕсенчен укçа-тенкĕ илессине чакарни çинчен уйрăммăн чарăнса тăрать. Бюджет комиссийĕ, — тет вăл, — депутатсем пăхса тухмашкăн РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджетне улшăнусем кĕртме сĕнет. Бюджет комиссийĕ, уйрăммăн илсен, промышленноçпа хуçалăх организацийĕсен тупăшĕсенчен илекен укçа-тенкĕне 32 миллион тенкĕ чухлĕ ӳстерме кирлĕ, тесе шутлать.

Юлашкинчен содокладчик — кашни область, край, автономлă республика, мĕнпур финанс органĕсем тата вырăнти советсем вырăнти бюджета уйăхран уйăхах, кварталтан кварталах пурнăçа кĕртсе пыма тивĕçлĕ, тесе калать.

— Бюджетăн цифрисенче, — тет Власов юлташ, — Россия Федерацийĕнчи халăхсем хамăрăн тăван совет çĕршывĕн çарпа экономика хăватне татах та ытларах çирĕплетес ĕмĕтпе пурăнни, фашистла нимĕç захватчикĕсене кĕске вăхăтра та пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкас ĕçе çывхартас ĕмĕтпе пурăнни палăрса тăрать. Пирĕн çĕнтерĕвĕн никĕсĕ — Совет Союзĕнчи халăхсен иксĕлми туслăхĕ, вĕсем хăйсен тăван çĕршывне юратни, вĕсем Совет правительстви, большевиксен партийĕ тата хамăрăн аслă çулпуç Сталин юлташ тавра таччăн пĕтĕçсе тăни пулать.

Содокладчикăн юлашки сăмахĕсене залра ларакансем нумайччен тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Çакăнпа РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш Сессийĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăнать. (ТАСС)

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх

Кӳршĕри колхозсене вăрлăх парса пулăшаççĕ

ИШЛЕИ, мартăн 2-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Уйрăм колхозсенче вăрлăхлăх тырă çитменнисем пур. Сăмахран, «Красное Оточьево», «Искра», Тельман, Калинин ячĕсемпе тăракан колхозсен сĕлĕ, пăрçа, хуратул, клевер, çĕрулми вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Вĕсем çитмен вăрлăхсене юнашарти колхозсенчен ытти тырăсемпе улăштарса илеççĕ. Водопьянов ячĕпе тăракан колхоз «Красное Оточьево» колхоза 25 центнер, «Искра» колхоза 50 центнер, Тельман ячĕпе тăракан колхоза 25 центнер парса пулăшать. «Парижская Коммуна» колхозăн вăрлăхлăх тырри кондицие ларман пирки вăл «Новая жизнь» колхозран 70 центнер улăштарса илнĕ. «Серп и Молот» колхозăн вăрлăхлăх вика çитмен. Вăл Кăшлавăшри Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозран 12 центнер ырашпа улăштарнă. Çавăн пекех Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз та Водопьянов колхозран 18 центнер вăрлăх ырашпа улăштарнă.

Районра колхозниксенчен вăрлăхлăх тырă пухассине организацилемен. Çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Лазарев юлташ каланă тăрăх, вăрлăхлăх тырă пухма колхозсене кăтарту та паман. Районра клевер вăрлăхне пурĕ те 46,1 процент кăна хывнă, анчах çак тĕслĕх те район руководителĕсене пăшăрхантармасть.

—Пĕтĕм районĕпе илсен, пирĕн вăрлăх çитет,—тесе лăпланса лараççĕ.

Т. ИВАНОВ.

Çуракине хатĕрленсе çитнине тĕрĕслерĕç

ПЕРВОМАЙСКОЕ. (**Телефонпа**). Анат Тăрмăш ялсоветĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Васильев юлташ) çуракине тухма хатĕррине тĕрĕслесе пăхнă. Лашасем пурте вăтам ӳт-пӳллĕ, вĕсен хăмăчĕсене, йĕнерчĕкĕсене тата ытти ут таврашĕсене те юсанă. Тĕрĕслӳре плугсем, сӳресем, машинăсем пурте хатĕрри курăнчĕ. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене тасатса хунă, вĕсем лайăх шăтаççĕ.

Уя 3200 лав тислĕк кăларнă, 100 центнер кĕл, 5 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Ку ĕçсенче кӳлме вĕрентнĕ 5 вăкăрпа анлăн усă курнă.

Тĕрĕслӳ Ленин ячĕпе тăракан колхоз çуракине тухма пур енчен те хатĕррине кăтартрĕ.

В. ДАВЫДОВ.

Улмалуй ялсовечĕ колхозсенчен аякра тăрать

ЖТЯБРЬСКОЕ. Улмалуй ялсовечĕн председателĕ Журавлев юлташ колхозсене çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕклĕ ертсе пымасть. Вырăнти удобренисем пухса уя кăлармалли уйăхлăх пынă чухне вăл — «Колхозсенче çавăн пек ĕç пыни çинчен эпĕ пĕлместĕп» тесе ирттерчĕ. Çавна пула та ĕнтĕ Улмалуй ялсоветĕнчи «Красный борец», «Красный танк», «Авангард» колхозсем вырăнти удобренисем пухма халĕ те пикенсе тытăнман.

Салари «Красный борец» колхозăн вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттармалли плана пурнăçлама пур майсем те пур. Выльăх-чĕрлĕх витисенче тислĕк купаланса выртать. Лашасем те, çынсем те ĕçлеме пултараççĕ, анчах ĕçе организацилени çук. Колхоз правленийĕ çĕре çемçетес ыйтупа интересленмест, тырпул хăй тĕлленех тухăçлă пулассине шанса ларать. Колхозри 8 плуга çак вăхăта çитсе те юсаса лартман, вăрлăхсене сортласа пĕтермен. Колхозра ĕçе юрăхлă лашасене кӳлме хатĕрсем çитмеççĕ пулин те, ут таврашĕсене юсас ĕçе организацилемен.

Ялсовет исполкомĕн председателĕ Журавлев юлташ çакăн пек çитменлĕхсем çинчен пĕлмест мар, анчах вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Вăл колхозсен ĕçĕсемпе интересленмест, унта кайса пăхмасть, кунран-кун вăхăта ялсоветĕнче ларсах ирттерет.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, халĕ фронтовой уйăхлăх пырать. Çак уйăхлăхра çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитмелле, ĕçе колхозниксен анлă массине мобилизацилемелле.

С. РУМЯНЦЕВ.

Туса çитермен ĕçсем чылай-ха

ВАРМАР. Шăхальти «Социализм» колхоз январĕн 1-мĕшĕ тĕлнех пур тĕрлĕ вăрлăхсене те сортласа хатĕрленĕ. Вăрлăхсем тĕрĕс те лайăх шăтаççĕ. Ялхуçалăх машинисене, плугсемпе сӳресене юсаса хунă. Лаша таврашĕсене юсама уйрăм çынсем тытнă. Вĕсем колхозри лаша кӳлмелли хатĕрсене çак эрне хушшинче пурне те юсаса çитереççĕ.

Паянхи куна колхоз хире 4000 лав ытла тислĕк кăларнă, 96 центнер кĕл, 82 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 115 гектар çинче юр тытнă. Колхозра лашасем çителĕксĕр. Çавăнпа 15 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ.

Анчах колхозра çитменлĕхсем те чылай-ха. Фекали хатĕрлес, торф кăларас ĕçсене пуçăнманпа пĕрех. Колхозри хăшпĕр бригадăсен лашасем начар. 2-мĕш бригадăри лашасем, начар пăхнă пирки, хĕллехи ĕçсене те тăваймаççĕ. Çуракине хатĕрленсе çитмелли уйăхлăхра çак çитменлĕхсене пĕтерес пулать. Туртăм вăйĕ çителĕклĕ пултăр тесен, ĕçе вĕрентмелли вăкăрсемпе хĕсĕр ĕнесене лайăхрах пăхмалла.

А. БИКТИМИРОВ,
Колхозри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа Нью-Иоркра митинг тунă

НЬЮ-ИОРК, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 27-мĕшĕнче Нью-Иоркра «Маджестик» театрта, Америкăпа Совет Союзĕн туслăхĕн Наци совечĕ пуçарнипе, Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа митинг пулнă. Митингра паллă деятельсем чылайĕшĕ сăмах тухса каланă.

Сенатор-демократ Мэррей (Монтана штачĕ) çапла каланă: «Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ çĕршывсем Совет Союзĕн халăхĕсем умĕнче вĕсем пĕрлехи тăшмана хирĕç çапăçса тӳсекен асапсемшĕн яланлăхах парăмлă пулса юлчĕç», тенĕ.

Алжирта Хĕрлĕ Çарăн уявĕ ячĕпе чаплă лару тунă

АЛЖИР, февралĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Франс-Африк агентстви çапла пĕлтерет: февралĕн 27-мĕшĕнче Францие Совет Союзне çывăхтарас тĕлĕшпе ĕçлекен общество Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа чаплă лару туса ирттернĕ. Çав ларура Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитетăн чылай комиссарĕсем тата дипломати корпусĕн представителĕсем пулнă.

Бенеш тухса калани

ЛОНДОН, февралĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Чехословаки республикин президенчĕ Эдуард Бенеш февралĕн 29-мĕшĕнче Лондонра сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Нумаях та вăхăт иртмĕ, Европăра иккĕмĕш фронт пулса тăрĕ».

«Европăна пырса кĕрсен тата вырăс фрончĕ Чехословаки чикки патне çывăхарсан (çакă вăл часах пулма пултарать), Чехословаки çыннисем сиксе тăрĕç, Польшăри, Югославири тата Францири патриотсем пекех, кĕрешĕве хутшăнĕç, тенĕ Бенеш.

Хăй Пĕрлешӳллĕ Штатсене тата Российăна кайса килни çинчен каласан, президент малалла çапла каланă: Совет Российине Европăри ĕçсенчен пăрса тăнă кунсем иртсе кайрĕç ĕнтĕ. Çав кунсем урăх нихăçан та пулмĕç тесе шанатăп», тенĕ.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: Англин 8-мĕш армийĕн чаçĕсем пĕр участокра малалла куçнă та пĕр çӳллĕ вырăна туртса илнĕ. Америкăн 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче артиллери тата разведка активлă кĕрешнĕ. Кĕпер умĕнчи укрепленисен районĕнче союзниксен çарĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă, тăшманăн пĕр пĕчĕк атакине сирсе янă.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер тăшманăн аэродромĕсемпе ытти объекчĕсене атакăланă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 600 вĕçеве яхăн тунă. Тăшман авиацийĕ кĕпер умĕнчи укрепленисем çине тапăнни пулман.

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче плацдармăн тĕп участокĕнче тăшман февралĕн 29-мĕшĕнче хытă хĕснĕ. 5-мĕш армин тĕп фронтĕнче шăп тăнă. Англин 8-мĕш армийĕнчи разведка чаçĕсем инçене кайса разведка тунă.

Ĕнер союзниксен авиацийĕ Витербори аэродромĕ çине, Дшулиановăри чугун çул сооруженийĕсем çине тата тăшманăн Анцио районĕнчи позицийĕсемпе çарĕсем çине бомбăсем пăрахнă, çавăн пекех тата тăшманăн Югослави çыранĕсем патĕнчи суднисем çине те бомбăсем пăрахнă.

ФИНЛЯНДИРИ ГИМНАЗИСЕНЧЕ ВĔРЕНТМЕ ПĂРАХНĂ

Швеции телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Финляндире чылай хуласенче—Котке, Ловизо, Борго, Хельсинки, Або хулисенче тата ыттисенче те гимназисенче вĕрентме пăрахнă. Унччен халăх шкулĕсемпе вăтам шкулсенче тата ремесла училищисенче вĕрентме пăрахнă пулнă. (ТАСС).

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, февралĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, гитлеровецсен çарĕсем Словенире виçĕ еннелле наступлени пуçласа янă. Вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă.

Герцеговинăра тăшман çарĕсем çаплах наступлени туса пыраççĕ. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем гитлерла оккупантсемпе хĕрӳллĕн çапăçаççĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçаççĕ.

ЖЕНЕВА, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Глина—Петрина фрончĕн участокĕнче Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем нимĕçсемпе тата усташа чаçĕсемпе хаяр çапăçаççĕ. Нимĕçсемпе усташа чаçĕсем ирĕке кăларнă территори çине татса кĕме хăтланаççĕ. Çавăн пекех Герцеговинăра та вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Кунта юлашки çапăçусенче ирĕке кăларассишĕн çапăçакан çар чаçĕсем 200 гитлеровеца, вăл шутра 41 офицера яхăн, вĕлерсе пĕтернĕ тата тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне яхăн амантнă. Тыткăна илнисем пур. Трофейăсем тытса илнĕ.

Словенире Горица патĕнчи фронтăн участокĕнче тата Марибора районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Кунта оккупантсем наступлени пуçласа янă, тăшмана пысăк сухатусем кӳреççĕ.

КĔСКЕН

● Пĕлтĕр Францире Виши влаçĕн представителĕсене тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пурĕ 473 çынна вĕлернĕ, 364 çынна амантнă. Кăçал патриотсем январьпе февральте кăна Виши влаçĕн представителĕсемпе нимĕçсене 288 çынна вĕлернĕ, 74 çынна амантнă. (ТАСС).

Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи çыхăнусем пирки

Юлашки вăхăтра ют çĕршывсенчи хаçатсем Финлянди Совет Союзне хирĕç вăрçма пăрахасси çинчен Совет Союзĕпе калаçать, тесе тĕрлĕ хыпарсем тата суя сăмахсем сараççĕ. Тĕрĕссипе илсен, Совет Союзĕпе Финлянди пĕр-пĕринпе официальнăй йĕркепе калаçма пуçламан-ха, халĕ çавăн пек калаçма хатĕрленесси çинчен çеç ыйту пырать.

Çак çулхи февралĕн варринче Швецири пĕр паллă промышленник Совет Союзĕн Стокгольмри посланникне А. М. Коллонтая çакăн çинчен пĕлтернĕ: Стокгольма Финлянди правительствин представителĕ Паасикиви господин килнĕ, ăна мĕнле условисене пурнăçласан Финлянди вăрçма пăрахма пултарни çинчен ыйтса пĕлме хушнă, тенĕ. Çав промышленник А. М. Колонтайран çапла ыйтнă: Совет Правительстви Финляндин хальхи правительствипе калаçма пултарать-и, вăл çав правительствăн представителĕпе Паасикиви господинпа тĕл пулма килĕшет-и? — тенĕ.

Совет Правительстви хушнипе А. М. Коллонтай çапла каланă: Совет Правительстви Финляндин хальхи правительствине шансах каймасть, анчах та финсен урăх май çук пулсан, Совет Правительстви, миршĕн тăрăшса, Финляндин хальхи правительствипе вăрçă ĕçĕсене пĕтерсе лартасси çинчен калаçма килĕшет, тенĕ.

Паасикиви господин февралĕн 16-мĕшĕнче А. М. Коллонтайпа официальнăй мар йĕркепе тĕл пулса калаçнă. Вăл çапла каланă: Финлянди правительстви мана Финлянди вăрçма пăрахасси пирки Совет Правительстви мĕнле условисем лартни çинчен пĕлме хушрĕ, тенĕ.

Тепре тĕл пулса калаçнă чухне А. М. Коллонтай Паасикиви господина Совет Правительствин ответне панă. Çав ответра пĕрремĕш тĕлĕшпе çакăн пек условисем лартнă:

1. Германипе çыхăнма пăрахмалла тата нимĕçсен Финляндири çарĕсемпе карапĕсене Финляндирен кăлармасăр пĕр вырăнта тытса тăмалла. Финлянди çак юлашки задачăна пурнăçа кĕртме вăй çитерейместĕп тет пулсан, Совет Союзĕ ăна хăйĕн çарĕсемпе тата авиацийĕпе пулăшма хатĕр.

2. Совет Союзĕпе Финлянди 1940 çулта тунă договора çĕнĕрен законлă туса хумалла тата финн çарĕсене 1940 çулта тунă чикĕсем патне илсе каймалла.

3. Тыткăна лекнĕ совет çыннисемпе союзниксен çыннисене, çавăн пекех тата Совет Союзĕпе союзниксен гражданĕсене, концентрациллĕ лагерьсенче усраканнисене тата финсем ĕçре усă кураканнисене халех каялла тавăрмалла.

4. Финн çарĕн пĕр пайне е ăна пĕтĕмпех салатса ярас ыйтăва Мускавра тĕл пулса калаçиччен хăвармалла.

5. Вăрçă ĕçĕсем тунă пирки тата Совет территорине оккупациленĕ пирки Совет Союзне кӳнĕ сиене саплаcси çинчен ыйтăва Мускавра тĕл пулса калаçиччен хăвармалла.

6. Петсамо районĕ пирки тăракан ыйтăва Мускавра тĕл пулса калаçиччен хăвармалла.

Паасикиви господина вара çапла каланă: Финлянди правительстви çак условисене халех йышăнма килĕшет пулсан, Совет Правительстви Финлянди представителĕсене Мускавра конкретнăй килĕшӳ тăвасси çинчен калаçма йышăнма хатĕр, тенĕ.

Ют çĕршывсенчи хăшпĕр хаçатсем тата çакăн пек хыпар сарнă: Совет Правительстви Финляндие пĕр сăмахсăр парăнма хушнă пулать, Совет Правительстви Финляндие Хельсинки хулине тата Финляндин ытти пысăк хулисене совет çарĕсем оккупацилессипе килĕшме хушнă пулать. Çакăн пек хыпарсем тĕрĕс мар.

СССР Наркоминделĕн Информаци Бюровĕ.

Çĕрулми тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлесси

Çĕрулми тĕп апат-çимĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Крахмал, патока, спирт тăвакан промышленноçа тата фронт валли те çĕрулми питĕ кирлĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ çĕрулми лартса тумалли çĕр лаптăкне çулран çулах ӳстерсе пымалла.

Колхозсемпе совхозсен, çавăн пекех рабочисемпе служащисен те çĕрулми вăрлăхне 1944 çулта лартса тума çителĕклĕ хатĕрлесе хурас пулать. Çĕрулми ытларах лартас тесен, çĕрулми тăррине Лысенко академик кăтартнă майпа вăрлăхлăх касса хатĕрлемелле. Апата каякан çĕрулми тăррине касса хăварни ытлашши вăрлăх хатĕрлеме, çапла вара планран ирттерсе çĕршер тонна çĕрулми туса илме май парать.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ 1943 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче çĕрулми тăрри касса хатĕрлесси çинчен уйрăм постановлени йышăнчĕç. Колхозсемпе совхозсенче, предприятисемпе учрежденисен подсобнăй хуçалăхĕсенче тата ытти организацисенче çĕрулми тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлес тĕлĕшпе кăтартусем тахçанах панă. Анчах та хăшпĕр районсенчи руководительсем çĕрулми тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлес ĕçе çителĕксĕр организацилеççĕ-ха.

Çĕрулми тăррине вăрлăхлăх касса хăварас ĕçĕн техники йывăр мар, анчах ăна тума пĕлни кирлĕ.

Çĕрулми тăррине апата е промышленноçа каякан çĕрулмирен касса хатĕрлемелле. Касакан çĕрулми шултăра тата чирлеменни пулмалла. Ăна пывпа çавиччен, çĕрулми пысăкĕшне кура, тăрринчен 5—15 грамм йывăрĕш касса илмелле. Çĕрулми тăррине аврпа çыхăнтарса тăнă тымарпа пăтраштарса яма юрамасть. Касса илмелли çĕрулми тăрринче шăтса тухакан куçĕсем ытларах пулаççĕ. Каснă чухне кашни çĕрулми тăррине пăхса тĕрĕслемелле. Çĕрулми варринче хура пăнчăсем е чирпчĕррĕн ытти паллисем пулсан, ун пек çĕрулми тăррине сыввисемпе хутшăнтармалла мар, çав вăрлăх аксан та шăтмасть тата ыттисене çĕртет.

Шултăра çĕрулмирен тăррине пысăкрах, вĕтĕрех çĕрулмирен—пĕчĕкрех касмалла. 50 грама яхăн кăна туртакан çĕрулмисен тăррисене касма кирлĕ мар. Çĕрулми тăррине ытлашши пĕчĕккĕ, 5 грамран кая кассан, вăл хăвăрт типсе ларать, унăн шăтас пахалăхĕ пĕтет.

Çимелли шултăра çĕрулми тăррине касса лартни хуçалăхшăн питĕ усăллă. Пĕр гектар лартма çĕрулмин 10—15-шер грамм туртакан тăррисем 4—5 центнер кирлĕ. Касмасăр лартакан çĕрулми йывăрăшĕ 40—50 шер грамран ытла мар пулсан та, пĕр гектар лартма 16—20 центнер каять. Çимелли шултăра çĕрулмин пĕр тоннинчен çĕрулми тăрри 80—100 килограмм тухать, е вăл 5 центнер чи паха çĕрулми вăрлăхĕпе танлашать. Шултăра çĕрулмирен касса илнĕ 10—15 грамм туртакан тăрăсене лартсан, 40—50 грамм туртакан касман çĕрулми лартнинчен ытларах çĕрулми тухать. Мĕншĕн тесен, шултăра çĕрулми сорчĕсем лайăхрах пулнипе, вĕсем тухăçлăрах çĕрулми пама пултараççĕ. Касса лартнă çĕрулми тăррисенчен йышлăрах та шултăрах тата лайăхрах çĕрулми пулать. Çĕрулми тухăçлă пуласси, пуринчен малтан, лартмалли вăрлăх пахалăхĕнчен килет, çавăнпа та чи лайăх сортлă çĕрулмине вăрлăхлăх уйăрса хумалла.

Колхозсен çĕрулми лартма планпа палăртнă çĕр лаптăкĕ валли çĕрулми тăрри мар, касман лайăх вăрлăхах хатĕрлесе хумалла. Планпа палăртнинчен ирттерсе лартмалли çĕр лаптăкĕ валли çеç çĕрулми тăррине вăрлăхлăх хатĕрлемелле. Çĕрулми тăррине ăна çимĕçре усă курма уйăрса парас умĕн подвалсемпе нӳхрепсенчех касса хăвармалла. Çавăнпа та çĕрулми тăрри касса хатĕрлеме уйрăм çынсене уйăрса лартас пулать, вĕсен хăйсен ĕçне ответлăха туйса туса пымалла.

Çĕрулми тăррине касса хатĕрленипе ĕç пĕтмест-ха, ăна акма вăхăт çитиччен лайăх сыхласа усрамалла. Каснă çĕрулми тăррине уçăрах вырăна, сивĕ мар çĕре хумалла. Вĕсене хранилищĕсенче, подвалсенче, тĕпсакайĕнче усрама юрать. Çĕрулми тăррисене усрамалли температура, вăрлăхлăх çĕрулмине усрамалли температура пекех, ăшă—3 градусран ытла мар, сивĕ—пĕр градусран ытла мар пулмалла. Кушăхса çитиччен çĕрулми тăррисене 5—10 кун хушши хулăнах мар сарса хумалла. Çак вăхăтра, вĕсем пĕр тан типчĕр тесен, вĕсене куллен алăпа пăтратса тămалла. Çĕрулми тăрри кушăхсан, кайран вара 30—40 сантиметр хулăмĕш купаласа хурса усрама та юрать. Вĕсене типĕ хăйăрпа е вĕтетнĕ тăпрапа хутшăнтарса хурсан тата лайăхрах, анчах тăрăсем çине кĕл сапма юрамасть.

Каснă çĕрулми тăррисем мĕнле усраннине яланах асăрхаса тăмалла. Вĕсем хушшинче çĕрме пуçланисем пулсан, вĕсене çийĕнчех уйăрса илмелле. Тата касса хатĕрленĕ çĕрулми тăррисем усранакан подвалсенчи, хранилищĕсенчи, тĕпсакайĕнчи температурăна та яланах тĕрĕслесе тăмалла, çĕрулми тăррисем шăнса е нӳрелсе пăсăласран асăрхамалла.

Каснă çĕрулми тăррисем усранă вăхăтра çĕрме пуçласан, суйласа илнĕ лайăх çĕрулми тăррисене формалин шывĕпе дезинфекцилемелле. Формалин шывне çапла хатĕрлемелле: пĕр пай 40 процентлă формалина 200 пай шыв çине ярса хутшăнтармалла. Вара çак формалин шĕвекне чиксе, каснă çĕрулми тăррисене 2—3 минут хушши тытса тăмалла, унтан 1—2 центнер чухлĕ ушкăнăн купаласа, 2—3 сехет хушши михĕсемпе е брезентсемпе витсе тăратмалла. Çапла тунипе çĕрулми чирĕсем пĕтеççĕ. Вара ун хыççăн çĕрулми тăррисене урайне 10 сантиметр хулăмĕш çӳхен сарса типĕтмелле. Типсе çитнĕ хыççăн малтан каланă пекех сыхласа усрамалла. Формалин шывĕпе çунă çĕрулмисене усракан хранилищĕне те формалин шывĕпе çумалла. Пĕр тонна çĕрулмине çума 40 процентлă формалин 700 грамм таран кирлĕ.

Çапла вара тĕрĕс касса хатĕрленĕ тата çуркуннеччен лайăх пăхса усранă çĕрулми тăрри паха вăрлăх пулса тăрать. Çуркунне çĕрулмине лартас умĕн 10—15 кун малтан, 12—15 градуслă ăшă тата çутă çуртра яровизацилесе лартсан, вăл татах та тухăçлăрах пулать.

Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ йышăннă постановлени тăрăх, çĕрулми тăррине вăрлăха юрăхлă касса хатĕрленĕ колхозниксене кашни килограммшăн е выльăхсем валли шултăра апат е, правлени ларăвĕ йышăннă тăрăх, ĕçкунĕ параççĕ.

Агроном **Н. КОНДАКОВ.**

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00572 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л, Тираж 14.400 экз.